23-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
6
ЭРНЕКУН
65(6816) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, паян, апрелӗн 5-мӗшӗнче, МАЛАЦКИ тата БРУК хулисемпе чугун ҫулсен паха узелӗсене туртса илнӗ, ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем ПРЕВИДЗА тата БАНОВЦЕ хулисене — нимӗҫсен Карпат тӑрӑхӗнчи оборонин вӑйлӑн тӗреклетнӗ пункчӗсене—ҫапӑҫса туртса илнӗ.

МАЛАЦКИ, БРУК, ПРЕВИДЗА, БАНОВЦЕ хулисене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ШУМИЛОВ генерал-полковникӑн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантӑн, МАНАГАРОВ генерал-лейтенантӑн, корпус генералӗ АТЯНАСИУ ертсе пыракан румынсен 1-мӗш армийӗн, ЛУКИН генерал-майорӑн, БИРМАН генерал-майорӑн, ЯКОВЛЕВ генерал-майорӑн, ПИГИН полковникӑн, АЛЕХИН генерал-майорӑн, КРУЗЕ генерал-майорӑн, РУБАНЮК генерал-лейтенантӑн, АФОНИН генерал-майорӑн, ШКОДУНОВИЧ генерал-майорӑн, РУМЯНЦЕВ генерал-майорӑн, МОЛОЖАЕВ генерал-майорӑн, КАРПУХИН генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, ЛОСЕВ генерал-майорӑн, МАРГЕЛОВ генерал-майорӑн, СОКОЛОВСКИЙ генерал-майорӑн, МИЛЯЕВ генерал-майорӑн, УМАНСКИЙ генерал-майорӑн, МАРОЛЬ полковникӑн, ОРЛОВ полковникӑн, ГУШИН полковникӑн, БАЛДЫНОВ полковникӑн, КОВТУН-СТАНКЕВИЧ полковникӑн, ЦАЛАЙ полковникӑн, САЖИН полковникӑн, КАРНАЧЕВ полковникӑн ҫарӗсем; КЛЮЕВ генерал-лейтенантӑн, ПИЧУГИН генерал-майорӑн, СОКОЛОВ генерал-лейтенантӑн, ПАВЛОВ генерал-майорӑн, БЕЛОУСОВ генерал-майорӑн, ХРУСТАЛЕВ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ДЕРЕШАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ПЕТРОВАН, артиллери генерал-майорӗн КОРЕЦКИЙЕН, артиллери генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕНКАН, артиллери генерал-майорӗн ПАВЛОВАН, артиллери генерал-майорӗн ИВАНОВАН, артиллери генерал-майорӗн ЗЫКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ПОПОВИЧАН, МАРЧЕНКО полковникӑн, БОРИСОВ полковникӑн, КЛИМАНОВ подполковникӑн, СИДЕЛЬНИКОВ подполковникӑн, СМИРНОВ подполковникӑн, ЛИТВИНЕНКО подполковникӑн, ГУБЕНКО подполковникӑн, ЯРГИН подполковникӑн, ГЛУШЕНКО подполковникӑн, БАРХОТОВ майорӑн, ШВЕЦОВ майорӑн, УСТИНОВ майорӑн, ШЕРБИН майорӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КУРКИНАН, СВИРИДОВ генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БОГДАНОВАН, СУПЯН полковникӑн, РУМЯНЦЕВ полковникӑн, ЛЯШЕНКО полковникӑн, МАЛЫШЕВ полковникӑн, ОГНЕВ полковникӑн, АНТОНОВ подполковникӑн, ЧИЧЕВ подполковникӑн, КИРИЛЛОВ подполковникӑн, ЧЕРНЕНКО подполковникӑн, ШАЛК подполковникӑн, МОРОЗ подполковникӑн, СЕМЕНЕЦ майорӑн, СЕВРЮКОВ майорӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЕЛЕЗНЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ПОДГОРНЫЙАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СТЕПИЧЕВАН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНАН, ТАРАНЕНКО полковникӑн, ЮДАКОВ полковникӑн, ГЕЙБО полковникӑн, ШУТЕЕВ полковникӑн, ЧИЖИКОВ полковникӑн, БЛАГОВЕЩЕНСКИЙ полковникӑн, КОМАРОВ полковникӑн, САПРЫКИН полковникӑн, КЛОБУКОВ полковникӑн, СЕМЕНЕНКО полковникӑн, Румыни ҫарӗн полковникӗн БУРДУЛОЮН летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЦИРЛИНАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ПЛЯСКИНАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ПЕТРОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВАН, ЗИМИН полковникӑн, МЯСНИКОВ полковникӑн, ЦЕПЕНЮК полковникӑн, КАЛИНИЧЕНКО полковникӑн, БУДАРИН полковникӑн, ИСАЕВ полковникӑн, БАДАЕВ подполковникӑн, ФОМЕНКО майорӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЛЕОНОВАН, БОРИСЕНКО полковникӑн, ЕГОРОВ полковникӑн, ГОРЕЛКИН полковникӑн, МАКАРЕНКО полковникӑн, ДАВЫДОВ полковникӑн, ШИШЕЛОВ майорӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн КАРПОВАН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, МАЛАЦКИ, БРУК, ПРЕВИДЗА, БАНОВЦЕ хулисене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 5-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫав шутрах румынсен корпус генералӗ АТЯНАСИУ ертсе пыракан 1-мӗш армийӗн ҫарӗсене те, малта асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, МАЛАЦКИ, БРУК, ПРЕВИДЗА, БАНОВЦЕ хулисене ирӗке кӑларасшӑн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, пиtӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе ник ама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи апрелӗн 5-мӗшӗ. № 331.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Арми генералне ЕРЕМЕНКАНА

Фронт штабӗн начальникне Генерал-полковника САНДАЛОВА

УКРАИНӐРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем паян, апрелӗн 5-мӗшӗнче, РУЖОМБЕРОК хулине—ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен Чехословакири Ваг шывӗ ҫинчи оборонин тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ.

РУЖОМБЕРОК хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ГАСТИЛОВИЧ генерал-лейтенантӑн, бригада генералӗ СВОБОДА ертсе пыракан чехословаксен корпусӗн, БРИЛЕВ генерал-майорӑн, МЕДВЕДЕВ генерал-лейтенантӑн, ПРОХОРОВ генерал-майорӑн, УГРЮМОВ полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, бригада генералӗн БОЧЕКАН, ВИНОГРАДОВ полковникӑн, бригада генералӗн САТОРЕН, БРОЖ полковникӑн, СЕЛЬНЕР полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн ИВАНОВАН, ЯКОВЛЕВ полковникӑн, МИРОНОВ полковникӑн, ТЕРЕХИН полковникӑн, БОЧЕК полковникӑн, КУЗЬМИН майорӑн, АКТЮРИН майорӑн, КУЛЕШОВ майорӑн артиллерисчӗсем; СЕРОВ полковникӑн, СНЕТКОВ майорӑн танкисчӗсем; ЖУРИН полковникӑн, КЛЮЧНИКОВ полковникӑн, ПОПОВ подполковникӑн, КОВАРЖЕК майорӗн саперӗсем; НЕКРАСОВ полковникӑн, СМИРНОВ подполковникӑн, НОСИКОВ майорӑн, АРТАМОНОВ капитанӑн связисчӗсем.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, РУЖОМБЕРОК хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 5-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 4-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫав шутрах бригада генералӗ СВОБОДА ертсе пыракан чехословаксен корпусне те, РУЖОМБЕРОК хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, РУЖОМБЕРОК хулине ирӗке кӑларасшӑн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, пиtӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи апрелӗн 5-мӗшӗ. № 332.

Лайӑх вӑрлӑх — ылттӑн пурлӑх

Кашни колхозӑн таса та паха вӑрлӑх пултӑр!

Ҫуракине хатӗрленсе ҫитнӗ

ИШЛЕЙ. (Хамӑр корр.). Кипечкасси ял Советӗнчи «Богатырь» колхозра кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илес тесе питӗ тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ку колхоз иртнӗ ҫул та начар мар тырпул туса илнӗ.

«Богатырь» колхоз пысӑк мар. Унӑн ҫуркунне акмалли ҫӗр лаптӑкӗ 120 гектар ытларах пулать. Ҫав ҫӗр лаптӑкне акма пур тӗрлӗ вӑрлӑх та ҫителӗклӗ тата паха кондициллӗ. Хӗллехи вӑхӑтра хире 3400 лав тислӗк турттарнӑ. 75 центнер кӗл пухнӑ. Ҫуракинче кирлӗ ялхуҫалӑх инвентарӗсене—22 плуг, 22 сӳре тата урапасем юсаса хунӑ. Колхозӑн лашасем вӑйлӑ та мӑнтӑр. 3 вӑкӑра ӗҫе вӗрентнӗ. Ҫав вӑкӑрсемпе хуралӑхри ӗҫсенче усӑ кураҫҫӗ.

Колхоз иртнӗ ҫулта ҫӗнӗрен тимӗрҫӗ лаççи тунӑ. Тимӗрҫӗ 60 ҫулхи М. Семенов юлташ ӗҫе питех те юратса тӑвать. Вӑл колхозӑн плугӗсемпе ӗҫ хатӗрӗсене юсаса пӗтерсе, кӳршӗри «Красный танк» колхоза та плугсем юсаса панӑ.

«Богатырь» колхозра производствӑллӑ планпа ҫуракинеирттермелли ӗҫ планне туса, колхозниксен пухӑвӗнче ҫирӗплетнӗ. Ҫураки вӑхӑтӗнче кашни колхозник хӑй мӗнле ӗҫре ӗҫлессине пӗлсе тӑрать. Лашапа ӗҫлеме ҫирӗплетнӗ колхозниксем хӑйсем ҫумне ҫирӗплетнӗ лашасене мӗнле пӑхнине витене кайса тӗрӗслеҫҫӗ, вӗсене лайӑхрах пӑхма пулӑшаҫҫӗ. Колхоз ҫуракине тухма хатӗр.

В. ГУСЬКОВ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн

Элӗк районӗнчи «15 лет Октября» колхоз иртнӗ ҫулта гектартан 14 центнер тырӑ туса илнӗ. Уйрӑм культурӑсем татах та тухӑҫлӑрах пулнӑ. Вика 21-шер центнер, ырашпа сӗлӗ 15-шер центнер пухса илнӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем, СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ ялхуҫалӑхне аталантармалли 1945 ҫулхи план ҫинчен йышӑннӑ постановленипе паллашнӑ хыҫҫӑн, мӗнпур вӑя ҫуракине хатӗрленес ӗҫе хучӗҫ, вӗсем кӑҫал татах та тухӑҫлӑрах тырпул туса илме ӗмӗтленеҫҫӗ. Хӑшӗсем тислӗк кӑлараҫҫӗ, хӑшӗсем кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, фекали тата ытти удобренисем пухаҫҫӗ, ут таврашӗсемпе ялхуҫалӑх инвентарьне юсаҫҫӗ. Ӗҫ пурин валли те ҫителӗклӗ.

Колхоз тахҫанах вӑрлӑхсене сортласа тасатнӑ, вӗсене шӑтарса пӑхнӑ. Вӑрлӑхсем паха.

Ку таранччен уя 800 лава яхӑн тислӗк кӑларнӑ, вӑл вӑтамран кашни гектар пуҫне 20 лава яхӑн тивет. Плугсемпе сӳресем пурте юсавлӑ.

Х. ЛИСИН.

Обязательствӑсене вӑхӑтра тултармалла

КӐКЕҪ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра пурнӑҫласси колхозсемпе колхозниксен хисеплӗ те ответлӑ задачисенчен пӗри пулать. Ҫакна районри уйрӑм колхозсен руководителӗсем ӑнланса илмен-ха. Ҫавна пула та ӗнтӗ государствӑна сӗт-ҫу памалли 1-мӗш кварталти плана 33 процент ҫеҫ тултарнӑ. «Победа», «Культура», «Тузи», «Чигирь», «Новая деревня», «Чӑваш Коммуни», Войков ячӗпе тӑракан колхозсем паянхи куна ҫитсе те государствӑна сӗт-ҫу пама тытӑнман. Ҫавӑн пекех Ҫӗнъял Уйҫас, Альгеш, Кочаково, Шӑнкас, Сарапайкасси ял Совечӗсене кӗрекен колхозсенчи колхозниксем те государствӑна 1945 ҫулшӑн сӗт-ҫу пама пуҫӑнман.

Государство умӗнчи обязательствӑсене колхозсен те, колхозниксемпе колхозницӑсен те вӑхӑтра тултарса пымалла.

Г. ПЕТРОВ.

Колхозсемпе ҫӗрӗҫ органӗсенче учетпа отчетноҫа йӗркелесе ямалла

Колхозсемпе ҫӗрӗҫ органӗсенче учетпа отчетноҫа тӗрӗс те йӗркеллӗ туса пымасӑр, социализмлӑ ялхуҫалӑхне кирлӗ пек оперативлӑ ертсе пыма май ҫук. Анчах та ҫак питӗ кирлӗ ӗҫе чылай районсенче ҫителӗклӗ хак памаҫҫӗ. Колхозсенче учет ӗҫне япӑхтарса янӑ пирки тата ҫӗрӗҫ органӗсенче отчетсем тӑратас ӗҫе начар йӗркеленӗ пирки пӗлтӗр республикӑра ҫурхирисемпе кӗртырисем акнӑ ҫӗр лаптӑкӗсене шута илнӗ чухне пысӑк йӑнӑшсем тунӑччӗ. Пӗлтӗр уйрӑм колхозсемпе ҫӗрӗҫ пайӗсем пӗлме тӑркачах тӗрӗс мар сведенисем тӑратнӑ. Хӗрлӗ Чутай райҫӗрӗҫ пайӗ, хӑйӗн аллинче колхозсем тӑратнӑ отчетсем пулнӑ пулин те, Наркомзема янӑ отчетра кӗрхи тырӑсем мӗн чухлӗ акнине ӳстерсе кӑтартнӑ. Пӑрачкав районӗнчи «Свет» колхоз 135 гектар акнӑ ҫӗртен райҫӗрӗҫ пайне 167 гектар акрӑмӑр тесе пӗлтернӗ. Ҫӗмӗрле районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 207 гектар акнӑ пулнӑ, анчах та отчетра 270 гектар акнӑ тесе ҫырнӑ.

Чылай вырӑнсенче ҫӳлерех тӑракан органсене отчетсем тӑратмалли срокссемпе йӗркесене пӑсаҫҫӗ, хӑшпӗр районсенче вара ҫырнӑ отчетсем тӑратас йӗрке вуҫех ҫук. Учетпа отчетность ӗҫне ҫавӑн пек сӳрӗк туса пыни райҫӗрӗҫ пайӗсенче кирлӗ пек дисциплина ҫуккине тата ҫав пирӗ кирлӗ ӗҫ ҫине пирӗн Наркомзем кирлӗ пек ҫивӗччӗн пӑхманнине кӑтартать. Наркомземӑн районри ҫӗрӗҫ пайӗсене тата колхозсене ҫак тӗлӗшпе тӑтӑшах контрольлесе тӑмалла, вӗсене учетпа отчетноҫа йӗркене кӗртме вӑхӑтра пулӑшмалла.

Учетпа отчетноҫа йӗркене кӗртмешкӗн райҫӗрӗҫ пайӗсенчи статистиксене халех тӗрӗслесе тухмалла, вӗсен кадрӗсене ҫирӗплетмелле, колхозсемпе райҫӗрӗҫ пайӗсене отчет ҫырмалли бланксем вӑхӑтра памалла, обязательнӑй йӗркепе хут ҫине ҫырнӑ отчетсем тӑратмаллине ҫӗнӗрен пурнӑҫа кӗртмелле. ВКП(б) райкомӗсен колхозсемпе ҫӗрӗҫ органӗсем мӗнле йӗркепе отчетсем тӑратнине тата вӗсем кӑтартнӑ цифрӑсем тӗрӗссине тӑтӑшах контрольлесе тӑмалла, государство отчетноҫӗн йӗркине пӑсакансене ҫирӗп ответ тыттармалла.

Ҫураки ҫывхарса килет. Колхозсенче ҫуракин пуҫламӗш кунӗсенчех ӗҫе тӗрӗс те ҫийӗнчех учета илсе пыма тытӑнмалла, колхозсемпе ҫӗрӗҫ органӗсем ҫураки мӗнле пыни ҫинчен ҫӳлерех тӑракан организацисене тӗрӗс сведенисем вӑхӑтра тӑратчӑр. Колхозсемпе ҫӗрӗҫ органӗсенче учетпа отчетность ӗҫне йӗркелесе ярасси ҫинчен ВКП(б) райкомӗсен халех сӳтсе-явмалла, учетпа отчетноҫа кӑтартуллӑн туса пыма май паракан мерӑсем йышӑнмалла.

Колхоз ҫуракине хатӗр мар

МУРКАШ. Йӳҫкасси ял Советӗнчи «Знамя» колхоз районра юлса пыракан колхоз шутланать. Вӑл иртнӗ ҫулта та гектартан вӑтам шутпа 5—6 центнер кӑна тӗштырӑ туса илнӗ. Начар тырпул туса илнин сӑлтавӗ—ҫуракине начар хатӗрленни. Ку колхоз кӑҫалхи ҫуракине те начар хатӗрленет. Акма 18 центнер урпа, 5,5 центнер хура тулӑ, 100 центнер ҫӗрулми вӑрлӑхӗсем ҫитмеҫҫӗ. Апла пулин те, кунта ҫак вӑрлӑхсене тупассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ. Вӑрлӑхсен шӑтас пахалӑхӗ 76 процента ҫеҫ ҫитет.

«Знамя» колхоз хӗллехи агротехника мероприятийӗсене пурнӑҫласа пымасть. 3 пин лав тислӗк кӑларас вырӑнне 300 лав ҫеҫ кӑларнӑ. Вырӑнти удобренисем пухмалли плана 30 процента яхӑн ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Хире 400 тонна торф кӑлармалла пулсан, пӗр лав та кӑларман. Ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫ те начар пулса пырать. 10 плугран 4-шне кӑна юсанӑ. Сӳресем ӑҫта килчӗ унта выртаҫҫӗ.

Лашасене кирлӗ пек пӑхмаҫҫӗ. Начар лашасене канма тӑратман. Планпа 7 вӑкӑра ӗҫе вӗрентмелле пулсан, паянхи куна пӗрне те вӗрентмен.

Ҫуракине тухас вӑхӑт иҫсе юлмарӗ, анчах колхоз руководителӗсем ҫуракине хатӗрленме васкамаҫҫӗ. Райҫӗрӗҫ пайӗн работникӗсем те кунта час-часах пулкалаҫҫӗ, анчах колхоза ҫуракине хатӗрленсе ҫитме пулӑшни курӑнмасть.

Ф. МАЛЫШКИН.

Агрокружокӑн паха ӗҫӗ

КАЛИНИНО. (Хамӑр корр.). Мӑн Явӑшри «Память Ленина» колхозра хӗлеренпех агрокружок ӗҫлет. Занятисем ҫирӗп расписани тӑрӑх пулса иртеҫҫӗ. Кружока колхоз председателӗ А. Воробьев юлташ ертсе пырать. Вӑл ҫав ӗҫе ялти учительсемпе опытлӑ колхозниксене тата активпа явӑҫтарнӑ.

Суха-акара ӗҫлеме тивӗҫлӗ колхозниксем занятисене пӗр сиктермесӗр ҫӳреҫҫӗ, занятисем активлӑн иртеҫҫӗ.

Н. КУЗЬМИН.

Трактористсен практики ӑнӑҫлӑ иртет

Эпир, Етӗрне МТС-ӗнчи курсантсем, халӗ кашни кун 5 сехет практикӑра пулатпӑр. Вӗрентекен Селиванов юлташ пире курсра мӗн вӗреннине ӗҫре кӑтартса парать, хӑйӗн опычӗпе паллаштарать. Эпир пурте ҫуракине лайӑх трактористсем пулса тухасса шанса тӑратпӑр.

Курсант Г. МИХАЙЛОВ.

Кӑтартуллӑ МТС-сем

СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ кӑҫал пур облаҫсемпе крайсенче тата республикӑсенче те кӑтартуллӑ ӗҫлекен машинно-тракторнӑй станцисем тума йышӑннӑ. Ҫавӑн йышши станцисене тӑвас ӗҫре пулӑшма наука сотрудникӗсенчен тата ялхуҫалӑх специалисчӗсенчен уйрӑм бригада туса хунӑ.

Пӗрремӗш кӑтартуллӑ МТС-а Ставрополь крайӗнчи Петровски районра тӑваҫҫӗ. Ҫав МТС районне кӗрекен колхозсенче ҫӗрпе усӑ курассине йӗркеленӗ: курӑк акмалли пусуҫаврӑнӑшӗ тунӑ, 10—12 километр йышӑнакан вӑрӑм участоксем вырӑнне 3—4 километр йышӑнакан участоксем уйӑрса хунӑ. Кашни уйхир бригади ҫумне трактор бригади ҫирӗплетнӗ. Петровски МТС районне кӗрекен пур 11 колхоза тата уйри стансене те телефонпа ҫыхӑнтараҫҫӗ. Диспетчер службине йӗркелеме палӑртса хунӑ. Халӗ телефон пралукне карма юпасем тата ытти материалсем хатӗрлеҫҫӗ. Ҫӗрте нӳрлӗх упраса хӑварма хирсенче йывӑҫсем лартма паллӑ туса хунӑ. МТС ҫумӗнче агрокабинет уҫӑлать. (ТАСС).

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Хуласемпе ялсене тасатмалли уйӑхлӑх ирттересси ҫинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫак ҫулхи апрелӗн 10-мӗшӗнчен пуҫласа республикӑри хуласене, рабочи поселоксене тата ялсене санитари тӗлӗшӗнчен тасатмалли, площадьсене, урамсене, килхушшисене, предприятисене, учрежденисене, общежитисене, пурӑнмалли ҫуртйӗрсене, ҫӑлсене тата халӑх пулакан ытти вырӑнсене йӗркене кӗртмелли уйӑхлӑх ирттерме йышӑннӑ.

Район (хула) Совет исполкомӗсен председателӗсене, Халӑх Комиссариачӗсемпе Управленисен, предприятисемпе учрежденисен руководителӗсене—хуласене, рабочи поселоксене, халӑх пурӑнакан пунктсене, предприятисене, учрежденисене тата вӗсен ҫывӑхӗсенчи территорисене тасатас ӗҫе халех тытӑнса, тасамарлӑхсенчен пӗтӗмпех тасатса ҫитерме хушнӑ.

Ҫак ӗҫе халӑха анлӑн хутшӑнтармалла. Хуласене, рабочи поселоксене тата ялсене тасатнӑ чух, вӗсене уйрӑм участоксене уйӑрмалла, ҫав участоксем ҫумне вырӑнти совет исполкомӗсенчен, медицина работникӗсенчен, обществӑллӑ санинспекторсенчен тата урам комитечӗсенчен ответлӑ работниксем ҫирӗплетмелле. Коммунальнӑй хуҫалӑхсен транспорчӗпе тата обозӗсемпе, предприятисен обозӗсемпе урӑх ӗҫсенче усӑ курма юрамасть, вӗсене тасамарлӑхсене турттарнӑ ҫӗрте кӑна ӗҫлеттермелле. Ҫак ӗҫре промышленность предприятийӗсен транспорчӗпе те усӑ курмалла. Унсӑр пуҫне тасамарлӑхсене ҫунашкасемпе туртса носилкӑсемпе, корзинкӑсемпе, ещӗксемпе йӑтса тӑкассине организацилемелле. Совхозсен, колхозсен тата подсобнӑй хуҫалӑхсен транспортне тислӗкпе ытти тасамарлӑхсене уйхире удобрени вырӑнне турттарнӑ ҫӗре хутшӑнтармалла. Тасамарлӑхсене пӗчӗк шывсене тӑкма юрамасть. Вӗсене уйхире, пахчасене е ятарласа палӑртнӑ вырӑнсене кӑларса тӑкмалла, ҫунтарса ямалла, ҫӗре чавса чикмелле.

Хуласенче ҫуркунне канализаци системине тӗрӗслесе тухмалла.

Халӑх Комиссариачӗсене, Управленисен начальникӗсене, хуҫалӑх организацийӗсемпе учрежденисен руководителӗсене, ҫуртйӗр управляющийӗсене тата харпӑрхӑй ҫуртӗсен хуҫисене—вӗсем тытакан вырӑнсемпе ҫуртйӗрсене тасатса йӗркене кӗртме хушнӑ.

Хуласемпе ялсене тасатса йӗркене кӗртес ӗҫе ертсе пыма Чӑваш АССР Совнаркомӗ республикӑри комисси тунӑ. Унӑн председателӗ—Чӑваш АССР Совнарком председателӗн заместителӗ Евлампьев юлташ, членӗсем—Коммунальнӑй хуҫалӑх Халӑх Комиссарӗ Сорокин, Сывлӑх Халӑх Комиссарӗ Лихачев тата Республикӑри милици начальникӗ Калашников юлташсем.

Хуласемпе ялсене тасатас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссисене хуласемпе районсенче те тумалла. Комисси председателӗ—район (хула) Совет исполкомӗн председателӗ, членӗсем—коммунальнӑй хуҫалӑх отделӗн заведующийӗ, милици начальникӗ, сывлӑх отделӗн заведующийӗ пулмалла. Районсемпе хуласенчи комиссисен предприятисене, рабочи поселоксене, учрежденисене тата общежитисене тасатас тӗлӗшпе ӗҫлекен оперативлӑ тройкӑсем тумалла.

Районсемпе хуласенчи комиссисем ҫак ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен республикӑри комиссие кашни кун пӗлтерсе тӑма тивӗҫлӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Нумай ачаллӑ амӑшӗсене „Ача амӑшӗн мухтавӗ“ ятлӑ орденпа тата „Ача амӑшӗсен медалӗ“ ятлӑ медальпе наградӑласси ҫинчен

СССР Верховный Совет Президиумӗн 1945 ҫулхи августӑн 18-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, СССР Верховный Совет Президиумӗ ячӗпе ҫаксене наградӑлас:

УЛАТАР ХУЛИ ТӐРАХ

Сакӑр ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене «АЧА АМАШӖН МУХТАВӖ» ЯТЛА II-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Татьяна Сергеевна Алховӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
2. Мария Степановна Емашевӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.

Ҫичӗ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене «АЧА АМАШӖН МУХТАВӖ» ЯТЛА III-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Наталия Ивановна Башаровӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
2. Анна Васильевна Куприяновӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
3. Елизавета Петровна Мокеевӑна—ашкакай комбинатӗнчи работницӑна.
4. Анна Ивановна Степановӑна—кулхуҫи хӗрарӑмне.

Ултӑ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене «АЧА АМАШӖСЕН МЕДАЛӖ» ЯТЛА I-МӖШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Клавдия Григорьевна Агеевӑна—вӑрман хуҫалӑхӗнчи служащие.
2. Вера Андреевна Воронковӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
3. Евдокия Фроловна Добросмысловӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
4. Наталия Яковлевна Еремкинӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
5. Екатерина Ивановна Илюшкинӑна —килхуҫи хӗрарӑмне.
6. Анисия Макаровна Ледяевӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
7. Таисия Андреевна Плоткинӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
8. Пелагея Герасимовна Слеповӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
9. Любовь Егоровна Самсоновӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
10. Евдокия Ефимовна Чекушинӑна —килхуҫи хӗрарӑмне.
11. Анна Сергеевна Фунтиковӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.

Пилӗк ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене «АЧА АМАШӖСЕН МЕДАЛӖ» ЯТЛА II-МӖШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Анна Васильевна Барановӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
2. Александра Николаевна Доронинӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
3. Пелагея Ивановна Егоровӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
4. Варвара Георгиевна Илюшинӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
5. Екатерина Павловна Кулаковӑна —килхуҫи хӗрарӑмне.
6. Пелагея Васильевна Моховӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
7. Дарья Андреевна Никольскаяна—килхуҫи хӗрарӑмне.
8. Екатерина Павловна Торгашевӑна —килхуҫи хӗрарӑмне.
9. Евгения Михайловна Фроловӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 ҫулхи мартӑн 22-мӗшӗ.

Фронтовиксен ҫемьисене пулӑшаҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамӑр корр.). Фронтовиксен ҫемьисене пулӑшас ӗҫ чылаях лайӑхланчӗ. Февраль уйӑхӗнче кӑна районӗпе фронтовиксен ҫемьисене 3858 килограмм ҫӑнӑх, 630 килограмм аш-какай, 71 килограмм ҫу, 90 килограмм ҫӑм, 84 мӑшӑр ҫӑматӑ парса пулӑшнӑ.

Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз членӗ пулнӑ Федор Романов Отечественнӑй вӑрҫӑ фронтӗнче нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ. Ана Правительство Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗпе наградӑланӑ. Романов юлташ тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫса паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ. Унӑн ҫемьине колхоз тата райсовет исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ пулӑшса тӑраҫҫӗ. Юлашки кунсенче Романов ҫемьине 20 килограмм ҫӑнӑх, 8 килограмм аш-какай, пӗр килограмм ҫу, ачисем валли икӗ мӑшӑр ҫӑматӑ парса пулӑшнӑ. Ҫавӑн пекех «Родина» колхоз членӗ Егор Фадеев фронтра тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫать. Кӑҫал унӑн ҫемьинче пысӑк инкек пулнӑ—ҫурчӗсем ҫунса кайнӑ. Унӑн ҫемьине колхоз яланах пулӑшса тӑрать. Нумай пулмасть, Фадеев юлташӑн ачисене икӗ мӑшӑр ҫӑматӑ, 6 центнер тырӑ парса пулӑшнӑ.

С. ШАДИН.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн

И. М. ЧАРЫКОВ
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ

Совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçи вăхăтĕнче колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен хĕрÿллĕн ĕçлемелле пулчĕ. Фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах какай, сĕт, çăм тата ытти продуктсем парасси—мĕнпур колхозсен тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пирĕн республикăри нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх хисепне чылай ÿстерчĕç, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем вăрçăчченхи çулсенчен ытларах парса тăма тытăнчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче республикăра мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 73,6 процент, сыснасен хисепĕ 32,1 процент тата сурăхсемпе качакасен хисепĕ 119,3 процент чухлĕ ÿсрĕ. Халĕ пирĕн задача—колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен пахалăхне татăклăнах лайăхлатасси пулса тăрать. Колхозсен фермисенче ама выльăхсемпе пуринпе те усă курмалла, çамрăк выльăхсем ытларах илсе пăхса ÿстермелле. Кашни ĕнерен ытларах сĕт суса илмелле, сысна çурисем, пăрусем, путексем тата тихасем ытларах пăхса ÿстермелле. Ÿссе çитнĕ выльăхсемпе çамрăк выльăхсем вилни пачах та пулмалла мар, пур пек выльăхсене пурне те лайăх пăхса сыхласа усрамалла. Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен задачи, çакăн пек ĕнтĕ фронт заказĕ.

Халăхи вăхăтра колхозсен фермисенче çамрăк выльăхсем нумай çуралаççĕ. Колхоз председателĕсен, специалистсен тата çĕрĕç органĕсенчи мĕнпур работниксен фермăсенче çамрăк выльăхсене лайăх пăхса илсе, сыхласа усрас тĕлĕшпе куллен тата хĕрÿллĕн ĕçлемелле. Колхозсем çамрăк выльăхсене пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварсан кăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарма тата выльăхсен йышне ÿстерме пултараççĕ. Республикăри малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕхсен хисепне вĕсене сутăн илсе мар, шăпах ĕнтĕ хăйсен çамрăк выльăхĕсене пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварса йышлатса пыраççĕ.

1944 çулта республикăри нумай районсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлерĕç. Нумай колхозсенче выльăхсем, уйрăмах çамрăк выльăхсем, чылай вилсе пĕтнĕ. Çакна пула хăшпĕр районсем 1944 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртеймерĕç.

Кăçал колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ валли апат çителĕклех пулчĕ. Апла пулин те, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çĕрĕç органĕсем тата партипе совет организацийĕсем нумайĕшĕ çителĕксĕр çавăрса пăхнине пула, çамрăк выльăхсене пăхса усрас ĕçре пĕлтĕрхи йăнăшсем каллех пулни курăнать. Кăçалхи иртнĕ икĕ уйăх хушшинче фермăсенче çамрăк выльăхсем нумай вилнĕ. Калинино районĕнче кăçалхи январьпе февраль уйăхĕсенче пăрусем 10,5 процент, Йĕпреç районĕнче 6,1 процент, Тăвай районĕнче 4 процент, Çĕрпÿ районĕнче 3,1 процент вилнĕ. Çавăн пекех Чурачăк, Советски тата Красноармейски районсенче те пăрусем нумай вилнĕ. Çав вăхăт хушшинчех Шупашкар районĕнчи колхозсенче сысна çурисен 21 проценчĕ, Сĕнтĕр районĕнче 13 процент вилсе пĕтнĕ. Калинино, Первомайски, Çĕрпÿ, Советски тата ытти районсенче путексем нумай вилнĕ. Хăшпĕр колхоз председателĕсем, çĕрĕç работникĕсем тата районсен руководителĕсем кăçал çамрăк выльăхсем пĕлтĕрхинчен сахалтарах вилнĕ тесе лăпланма пăхаççĕ. Çакăн пек иртнĕ çулпа танлаштарса ларни сиенлĕ. Çакă вăл эпир хамăрăн çитменлĕхсене курманнине, вĕсене пĕтерме тăрăшманнине пĕлтерет. Кăçал выльăх апачĕ çителĕклĕ, çавăнпа та выльăх-чĕрлĕхе пĕтĕмпех сыхласа хăварма пирĕн пур майсем те пур.

Çакна асра тытас пулать: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кашни район тата колхоз пĕтĕмĕшпех пурнăça кĕртесси халĕ фермăсенче çамрăк выльăха кĕтсе илес тата пăхса усрас ĕçе лайăх организацилениничен килет. Выльăх вилсен, ун çинчен обязательнăй йĕркепе колхоз правленинче, колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе-явмалла, малашне выльăх-чĕрлĕхе лайăх сыхласа усрас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене тумалла.

ССР Союзĕн Совнаркомĕ 1944 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче «Чăваш республикинчи колхозсенче çамрăк выльăхсене пăхса ÿстермелли заданисене иртгерсе тултарнăшăн тата ÿснĕ выльăхсене лайăх сыхласа усранăшăн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă постановление партипе совет тата çĕрĕç органĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен мĕнпур колхозниксемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен работниксене тĕплĕн ăнлантарса парас пулать. Çак питех те кирлĕ закона пĕлмен пĕр колхозник те ан пултăр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кашни работник ăна тĕплĕн пĕлсе тăтăр. Выльăх-чĕрлĕхе сыхласа усранăшăн тата çамрăк выльăхсене пăхса ÿстернĕшĕн хушса тÿлемелли закона республикăри пур колхозсенче те пĕр пăрксланмасăр пурнăça кĕртсе пымалла тăвас пулать.

Правительствăн çав постановленийĕ тăрăх, фермăри кашни работникăн ĕçне тивĕçлипе хаклаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Комбайн» колхозри пăрусене пăхакан Анна Данилова пĕлтĕр 23 пăру илнĕ те, пурне те пăхса ÿстернĕ. Вăл, ĕçкунĕсемсĕр пуçне, хушса тÿлес йĕркепе, 11 килограмм какай илнĕ. Данилова юлташ кăçал та çавăн чухлĕ пăру пăхса ÿстерет пулсан, вăл, çÿлте асăннă постановлени тăрăх, ĕçкунĕсемсĕр пуçне, чĕрĕлле 69 килограмм туртакан сысна е икĕ уйăхри 6 çăвăр илет. Элĕк районĕнчи «Прожектор» колхозри сыснасене пăхакан Пелагея Максимова пĕлтĕр хăйне çирĕплетсе панă 7 сыснаран 116 çăвăр илсе пăхса ÿстернĕ. Максимова юлташ кăçал та çавăн пек ÿсĕмсем тăвас пулсан, вăл, ĕçшĕн хушса тÿлес йĕркепе, 11 çăвăр илет. Элĕк районĕнчи «Большевик» колхозри конюх П. Николаева пĕлтĕр 11 кĕсререн 9 тиха илсе пăхса ÿстернĕ. Николаева, ĕçкунĕсемсĕр пуçне, хушса тÿлес йĕркепе, 180 килограмм тĕштырă илнĕ. Вăл, кăçал та çавăн пек ÿсĕмсемех тăвас пулсан, 225 килограмм тĕштырă, пĕр пăру е 4 уйăхри икĕ путек илме пултарать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен опытне анлăн сарса пымалла, пур колхозниксене те вĕсем пек ĕçлеме вĕрентмелле.

Сыснасем ĕрчетесси çинчен уйрăмах чарăнса тăни кирлĕ. 1944 çулта республикăри нумай колхозсем сысна ĕрчетес тĕлĕшпе начар ĕçлерĕç. Колхозсен фермисенче ама сыснасем нумай пулин те, чылай колхозсенче сысна çурисене ÿстерсе государствăна пама самăртас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Хĕллепе çуркунне фермăсенче çуралакан сысна çурисене нумай колхозсем аякалла сутса пĕтереççĕ, фермăсенче çулла çуралнă çăварсене кăна хăвараççĕ. Çакăн пирки вара кĕркунне тĕлне фермăсенче самăртса государствăна памалли сыснасем пулмаççĕ. 1944 çулта республикăри колхозсем государствăна аш-какай шучĕпе панă выльăхсен шутĕнче сыснасем 20 процент кăна пулнă. Колхозсем какай памалли хăйсен обязательствисене, пуринчен ытла, мăйракаллă шултăра выльăх парса тултараççĕ, сыснасем сахал параççĕ. СССР Совнаркомĕ 1945 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче «Колхозсенче сыснасен хисепне ÿстересси тата вĕсене самăртасси çинчен» йышăннă постановлени сысна çурисене пăхса ÿстерсе государствăна пама самăртас тĕлĕшпе колхозсем умне питĕ пысăк задача лартать. Хăшпĕр районсен руководителĕсем çак решение пурнăça кĕртсе пынине тивĕçлипе тĕрĕслесе тăмаççĕ-ха. Красноармейски районри колхозсенче кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 20-мĕшне çитиччен 1.500 сысна çури çуралнă, фермăсенчи сыснасен пĕтĕм хисепĕ вара 34 сысна чухлĕ кăна ÿснĕ. Аçта кайса кĕнĕ-ха ытти сысна çурисем? 1.500 çăвăртан 1000 çăварне ытла колхозсем аякалла сутса пĕтернĕ иккен. Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпÿ, Чурачăк, Вăрмар, Тăвай, Куванино тата ытти районсенче те сысна çурисене çавăн пекех салатса пĕтереççĕ. Хăшпĕр колхоз руководителĕсем сыснасене çитерме тĕштырă çитмест тесе каласма пăхаççĕ. Çакă вăл тивĕçлĕ сăлтав мар. Вăрмар районĕнчи «Тукас» колхоз председателĕ колхозăн сысна çурисене пурне те сутса пĕтерме хушнă. Сыснасене ку колхозра çĕрулмипе кăна тăрантараççĕ. Колхозăн клевер тата люцерна арпи нумай. Çак апат сĕлĕпе танах пулнине тĕпчесе палăртнă ĕнтĕ. Çав районри «Дружба» колхозра сыснасене çĕрулмипе утă çăнăхне е люцерна хутăштарса параççĕ. Сыснасем кунта яланах мăнтăр. Мĕншĕн-ха «Тукас» колхозра сыснасене клевер е люцерна арпипе тăрантарма пулмасть?

Ялхуçалăх специалисчĕсен, çĕрĕç работникĕсен колхозсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре зоотехникăпа ветеринари енчен пулăшу памалла, çамрăк выльăхсене сыхласа хăварса пăхса ÿстерме пулăшмалла. 1945 çулта республикăри пур колхозсем те сысна çурисене пăхса ÿстерсе, государствăна пама сыснасем самăртас тĕлĕшпе правительство панă заданисене пĕтĕмĕшпех пурнăçламалла.

Колхозсенче кайăк-кĕшĕк, уйрăмах хур-кăвакал ĕрчетесси çине, çавăн пекех тата хурт-хăмăр ĕрчетесси çине те ытларах çаврăнса пăхмалла. Октябрьски районри организацисемпе колхозсем хурсем ĕрчетес тĕлĕшпе 1944 çулта чылай ĕçсем турĕç. Районри 76 колхозран 46 колхозĕ пĕлтĕр çĕнĕрен хурсем туянчĕç. 1945 çулта республикăри колхозсен кайăк-кĕшĕк ĕрчетес тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлемелле, кашни колхозăн хур-кăвакал туянмалла. Хурт-хăмăр ĕрчетме вĕçĕ-хĕррисĕр майсем пур. Хурт-хăмăр пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хурт-хăмăрсем паха çимĕç кăна мар параççĕ, вĕсем çавăн пекех ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерме, вăрлăхсем акса тăвас ĕçе аталантарма пулăшаççĕ. Пирĕн республикăри колхозсен пурин те хурт-хăмăр туянмалла тăвас пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре зоотехниксемпе ветеринари работникĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн чи лайăх специалистсем хăйсене тĕрлĕрен своднăсем çырса парассинчен тата ытти тĕрлĕ канцеляри ĕçĕсем парса тултарассинчен хăтарма тĕрĕс ыйтаççĕ. Зоотехник хăйĕн ĕç вăхăтне пуринчен ытларах производствăра, колхозсен фермисенче иртгерме тивĕçлĕ, унăн ферма работникĕсене зоотехника ĕçне йĕркелеме пулăшас пулать.

Специалистсемпе çĕрĕç органĕсен тĕп задачи—çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçленипе пĕрлех, колхоз фермисенчи выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне тĕпренех ÿстересси пулса тăрать. Таварлă сĕт-çу фермисенче чылайĕшĕнче ĕнесем сĕт сахал параççĕ. Колхозсен хăшпĕр фермисенче кашни тăрантаракан ĕнерен пурĕ те 400—500-шер литр кăна сĕт суса илеççĕ. Выльăх-чĕрлĕхе тăрантарас ĕçе тĕрĕс организацилес пулать. Зоотехниксен сăвакан ĕнесене зоотехника кăтартса паракан çирĕп правилăсем тăрăх тăрантарассине организацилеме ферма заведующийĕсемпе доярккăсене ĕçлĕ пулăшу памалла. Выльăхсене шултăра апат-çимĕç кăна мар, сĕткенлĕ апат-çимĕç те парса тăмалла. Хăшпĕр колхозсенче тĕрлĕ апатсене черетлĕн парса тăраççĕ: выльăхсене хăш уйăхсенче — утă кăна, хăш уйăхсенче вара— улăм е силос кăна параççĕ. Кулленхи рационра сĕткенлĕ апатсем те, шултăра апатсем те тата минераллă апатсем те пулччăр тесен, выльăхсене тĕрлĕ апат-çимĕçпе тăрантармалла. Пирĕн халĕ иртнĕ çулла хывса хăварнă силоспа усă курман колхозсем те пур-ха. Чкаловски районри Ленин ячĕпе тăракан колхозра выльăхсене хĕлĕпех шултăра апат-çимĕçпе тăрантарнă, анчах çав вăхăтрах иртнĕ çулла хывса хăварнă силоспа ку таранччен пĕрре те усă курман. Улăмпа ытти тĕрлĕ шултăра апатсене вакласа, вĕри шывпа çемĕçтерсе, ăшă шывпа пăтратса çитермелле тăвас пулать. Выльăхсене кĕтĕве ярсан та сăвакан ĕнесемпе çамрăк выльăхсене симĕс куракпа çителĕклĕн тăрантарма тăрăшмалла. Сăвакан ĕнесене çуллахи вăхăтра тăтăшах курăк çулса памалла. Çакăн валли çураки вăхăтĕнче фермăсем çумĕнчи участоксене çĕрулмипе тымарçимĕçсем тата ытти тĕрлĕ культурăсем акса хăварнисĕр пуçне, кашни колхозрах ĕнесене çитерме çĕртме пуссисенче е ытти участоксенче викăпа сĕлĕ хутăш акса хăвармалла. Çапла тăрантарсан ĕнесем сĕт ытларах паракан пулаççĕ.

Фермăсенче ĕçшĕн хушса тÿлемелли закона тĕрĕс пурнăça кĕртсе пыни выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кашни доярккăна хăй çумне çирĕплетсе панă ĕнерен ытларах сĕт суса илессишĕн хавхалантармалла.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатмалли паха ыйтусенчен пĕри вăл—выльăх-чĕрлĕхе хупса усрамалли çуртйĕрсене вăхăтра тăвасси тата юсасси пулса тăрать. Халĕ колхозниксен анлă массисене ĕне витисемпе сысна витисем, лаша витисемпе ытти тĕрлĕ обществăллă çуртйĕрсем тăвас ĕçе явăçтармалла. Çапла ĕçлесе, кашни колхоз Чăваш республики 25 çул тултарнине обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли лайăх çуртйĕрсем туса лартнипе кĕтсе илтĕр. Строительство материалĕсене вăхăтра хатĕрлесе турттармалла. Кашни колхозрах, çурхи уйхир ĕçĕсен хĕрÿллĕ вăхăтĕнче те, обществăллă çуртйĕрсене тунă çĕрте ĕçлеме çынсем тупăнма пултараççĕ. Çуртсене пурне те зоотехника правилисем хушнă пек тăвас пулать. Çĕрĕç органĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен колхозсене строительство планĕсемпе проекчĕсене тума, çавăн пекех тата çуртсем валли участоксем тĕрĕс суйласа илме пулăшмалла.

Хăшпĕр районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе оперативлăн ертсе пымаççĕ. Уйрăм работниксем хăйсене хăйсем колхозсенчи ĕçе аякран сăнаса тăракан çынсем пек тыткалаççĕ, ĕçре палăракан нумай тĕрлĕ çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи хăшпĕр колхозсенче лашасем вилнĕ фактсем пур. Юлашки эрне хушшинче кăна унта 6 лаша вилнĕ. Парти райкомĕ, 7—8 кун иртсен те, çав киревсĕр фактсене пăхса тухса, тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Чурачăк районĕнче мартăн 19-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче пĕр лаша вилнĕ, районри организацисем вара çав ĕç пулни 4 кун иртнĕ хыççăн та лаша мĕнле сăлтавпа тата кам айăпĕпе вилни çинчен пĕлмеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çавăн пек ертсе пыма юрамасть, ăна тăтăшах тимлĕн сăнаса тăмалла.

Советпа парти организацийĕсем ялхуçалăхĕнчи çав паха ĕçе пĕр вак-тĕвек юлмиччен куллен хутшăнса пыма, палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма тивĕçлĕ. Колхозсенчи партипе комсомол организацийĕсен обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтусемпе куллен интересленмелле, чĕрĕ туртăм вăйне çураки валли хатĕрлес, çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас, апат-çимĕç базине сарса çирĕплетес ыйтусемпе ытти тĕрлĕ ыйтусене хăйсен пухăвĕсенче тăтăшах сÿтсе-явмалла.

Пирĕн республикăри колхозсен 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарма тата иртгерсе тултарма пысăк майсем пур. Кунта райсовет исполкомĕсем, çĕрĕç органĕсем тата парти райкомĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе куллен çирĕп контрольлесе пыни тата колхозсене çак ĕçре практикăллă пулăшу парса пыни кирлĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн районсен тата колхозсен социализмлă ăмăртăвне анлăн сармалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен кашни работник, кашни конюх, доярка, свинарка выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн тата çамрăк выльăхсене тĕрĕс пăхса çитĕнтерессишĕн кĕрешĕве тухтăр. 1945 çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура Чăваш республикине малти рете кăларассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!



Ÿкерчĕк çинче: Куславкка комбинатĕнчи слесарь **В. Винокуров.** Вăл—комсомолецсемпе çамрăксен бригадин членĕ. Хăйĕн нормине 275 процент таран тултарать.
КАРПОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Комсомолăн районри конференцийĕ

ВАРМАР. (Телефонпа). Çак кунсенче кунта комсомолăн районри 11-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире комсомол райкомĕн ĕçĕсем çинчен Залевский юлташ отчетлă доклад туса пачĕ.

Отчетлă тапхăрта комсомолăн районри организацийĕ чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. Районри комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума 8030 тенкĕ укçа пухса панă. Иртнĕ çулта тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра 400 комсомолец уйхир ĕçĕнче ĕçленĕ. Вĕсенчен 56-шĕ машинистсем, 17-шĕ уйхир ĕçĕн бригадирĕсем пулса ĕçленĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсенче комсомолăн «Дружба», «Свобода», «Красные Мураты», «Заря», «Большевик» колхозсенчи организацийĕсем аван ĕçленине палăртмалла.

Кăçал та çак колхозсенчи комсомолецсем вăйлă тырпулшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. «Дружба» колхозра 60 вăкăра, «Социализм» колхозра 20 вăкăра кÿлме вĕрентнĕ.

Çамрăксен 9-мĕш номерлĕ трактор бригади ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулнă. О. Емельянова, А. Павлова, Е. Кондратьев комсомолец-трактористсем СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокне илнĕ.

Комсомол райкомĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Колхоз çамрăкĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Комсомол организацийĕсенче уçă пухусем иртгермеççĕ, çамрăксене интереслентерекен ыйтусене сахал сÿтсе-яваççĕ. Çамрăксемпе таччăн çыхăнса ĕçлемен пирки комсомол йышĕ вăрах ÿсет.

Отчетлă доклад тăрăх пренире 15 çын тухса каларĕç. Вĕсем комсомол райкомĕ çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă, çарпа физкультура ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынине, шкулсенчи пионер организацийĕсене тивĕçлипе ертсе пыманнине палăртрĕç.

Конференци тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ. ВЛКСМ райкомĕн çĕнĕ составне суйларĕ.

ВЛКСМ райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме А. Иванов юлташа, 2-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме М. Павлова юлташа суйланă.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Всевобуч боецĕсем комсомола кĕреççĕ

Шупашкар хулинчи Семечкин лейтенант начальник пулса ĕçлекен пунктри всевобуч боецĕсем вăрçă ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Çак кунсенче зачетсем пулса иртрĕç, нумай боецсем программăна лайăх ăнланни тата дисциплинăллă пулни курăнчĕ. М. Крылов, А. Ураковский, Вязников, Толстов, Зотов тата ытти боецсем зачетсенче пур дисциплинăсемпе те отлично паллăсем илчĕç. Нумай боецсем пăшалпа тĕл пеме, гранатăна инçе те тĕл ывăтма пултарнине кăтартса пачĕç. Халĕ вĕренÿ пунктĕнче оборона значокĕсен нормисене парас тĕлĕшпе хĕрÿ ĕç пырать.

Всевобуч боецĕсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне те начар мар туса пынă. Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿсем туса пынипе хавасланса, боецсем танксен «Боец всевобуча» ятлă колоннине тума 14.000 тенкĕ укçа пухса панă. Çавăншăн вĕсем Сталин юлташран саламлă телеграмма илнĕ.

Сталин юлташăн саламлă телеграмми всевобуч боецĕсене вăрçă ĕçне тата лайăхрах, тăрăшарах вĕренме хаваслантарчĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн чаплă воинĕ ятне илме пур енĕпе те лайăх хатĕрленсе çитме тăрăшаççĕ. Чи лайăх боецсем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕреççĕ.

В. ИВАНОВ.

Кăçалхи çуркунне ухутана çÿремелли сроксем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи çуркунне ухутана çÿремелли сроксене палăртнă. Ухутана çÿреме пурне те юракан вырăнсенче кăвакал аçисемпе шыв чăххисене апрелĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа майăн 15-мĕшĕччен, ăсансемпе каракăсене—майăн 10-мĕшĕччен тытма юрать.

Ухута обществин членĕсем хăйсен ухута хуçалăхĕсенче çÿлте асăннă вĕçенкайăксене вĕсем вĕçсе килнĕ вăхăтран пуçласа майăн 20-мĕшĕччен тытма пултараççĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем Мюнстер хулине тăшмантан тасатнă тата Ашаффенбург хулине йышăннă. Неймегенран çурçĕртерехре Вааль тата Анатри Рейн шывĕсем хушшинчи чылай пысăк района тăшмантан тасатнă. Çав районтан çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Лохем хулине те тăшмантан тасатнă. Герфорд хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Верре шывĕ урлă каçса кайнă. Рур «миххин» кăнтăр пайĕнче союзниксен çарĕсем Липпе—Зейтен каналĕ урлă каçнă, халь Гамм хули хĕрринче çапăçаççĕ. Пĕлтерÿре çавăн пекех Варбург тата Зиген хулисене йышăнни çинчен, Кассель хулинче çапăçусем пыни çинчен каланă. Зиген хулинчен 16 километр çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Зиг шывĕ урлă каçса кайнă. Çав шыв урлă союзниксен çарĕсем тата 13 километр кăнтăртарахра каçнă та 3 километр малалла кайнă. Союзниксен çарĕсем Вюрцбург хулине пырса кĕнĕ.

Апрелĕн 2-мĕшĕнче хĕвеланăç фронтĕнче союзниксем 27.771 çынна тыткăна илнĕ, вăл шутра—госпитальре выртакан нимĕç генералне.

Истребитель-бомбардировщиксем Голландири Амерсфорт хулипе Германири Бремен хули хушшинчи анлă территори çинче тăшманăн çулйĕр объекчĕсене тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Францири авиацийĕн штабĕ официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши самолетсен пысăк соединенийĕсем апрелĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла Гамбургпа Киль верфĕсене тата Çурçĕр Германири аэродромсене тапăннă. Бомбардировщиксене 850 истребитель ытла хÿтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши самолечĕсем Берлина тапăннă.

ГЕРМАНИРИ ÇАР ÇЫННИСЕМ ШВЕЦИЕ ТАРСА ПЫТАНМА ХĂТЛАНАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Германин хĕвелтухăç районĕсенчен нимĕçсен çар çыннисем Швецие нумай тарма пуçланă. Апрелĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче унта 68 нимĕç пынă, вĕсенчен 46-шĕ Гдыньăран моторлă баржăпа пынă. Çав çынсенчен нумайĕшĕ—офицерсем. Баржа Кальмар хулине пынă. Нимĕçсем хăйсене дезертирсене тыткаланă пек тыткалаттарасшăн мар пулнă. Баржа çинче медикаментсем, радиоаппаратсем, патефонсем, хуткупăссем пулнă. Кунсăр пуçне, баржа çинче васкаса пулăшу памалли автомобиль пулнă. Нумай нимĕçсем хĕçпăшаллă пулнă.

«Стокгольм тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Эланд утравĕнче пурăнакан халăх çав утрав еннелле пыракан парăслă кимĕсене курнă. Унта Хĕрлĕ Çартан таракан нимĕçсем йышлăн пырассине кĕтсе тăраççĕ.

МУССОЛИНИЕ ШВЕЙЦАРИРЕ ПУРĂНМА ИРĔК ПАНИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ХЫПАРСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви «Ньюс кроникл» хаçатăн Римри корреспонденчĕ пĕлтернине парать. Шанчăклă çĕрте пĕлнĕ тăрăх, корреспондент çапла калать: Швейцари правительстви Итали правительствине пĕлтернĕ тăрăх, Муссолини Швейцарире пурăнма шутлать пулсан тата вăл чирлĕ пулсан, ăна Швейцарире пурăнма ирĕк пама шутлаççĕ, тенĕ.

Çурçĕр Италирен пĕлтернĕ тăрăх, Муссолинин вар ыратать мĕн. Швейцарирен пĕлтернĕ тăрăх, хушса хурать корреспондент, Муссолинине нейтральнăй Швейцарире пурăнма ирĕк параççĕ курăнать.

ПОЛЬШĂРА ÇĔР РЕФОРМИ АНАÇЛА ИРТЕТ

ВАРШАВА, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Висла шывĕн сулахай енчи пур вырăнсенчен те Варшавăна çĕр реформи анăçлăн иртни çинчен пĕлтереççĕ.

Краков воеводстви хыççăн Варшавăпа Белосток воеводствисем помещиксен çĕрĕсене валеçсе пĕтернĕ. Нимĕçсем минăсем лартса тухнă уйрăм именисенче кăна вăл ĕçе тăвайман. Çав имени çĕрĕсене хăвартрах валеçес шутпа Польша çарĕн командованийĕ, Вăхăтлăх Правительство йышăннă тăрăх, унта сапернăй батальонсем янă. Вăл батальонсем ĕçе тытăннă та ĕнтĕ. Кельцы тата Лодзь воеводствисенче çĕре валеçсе пĕтереççĕ.

Туллимар даннăйсем тăрăх, 5 воеводство çĕрĕ çинче 2.400 имени çĕрĕсене хресченсене валеçсе панă. Çавна пула хресченсем темиçе çĕр пин гектар çĕр туяннă. 80.000 гектар çĕр йышăнакан 335 имение кăтартуллă хуçалăхсем, сăнавлă хирсем тума тата ялхуçалăх шкулĕсем уçма государство аллине панă.

РУМЫНИРЕ ЛЕГИОНЕРСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

БУХАРЕСТ, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Румыни влаçĕсем паллă легионерсене (Румыни фашисчĕсене) арестленĕ. Арестленисем хушшинче çаксем пур: «Тимĕр гвардие» ертсе пыракансенчен пĕри Раду Мейтани, Румынири легионерсен юхăмне организацилекенсенчен пĕри Петре Нямцу инженер, гестапо агенчĕ Белинский, легионерсен пуçлăхĕ Ион Медиану, нимĕçсен çынсене вĕлерме хистерекен кĕнекисене пичетлесе кăларакансем Георге Апанасе тата Адриан Пашку тата ыттисем те.

КĔСКЕН

▲ Оттава хулине (Канада) Англин çар производстви министрĕ Литтлтон тата Англин апат-çимĕç снабжени министрĕ Льевелин пынă.

▲ Болгарири министрсен совечĕ 1941 çулта Филовăн фашистла правительстви профсоюзсем пирки кăларнă закона пăрахăçланă. Вăл закон рабочисемпе служащисене ирĕклĕ профсоюзсене пĕрлештерме чăрмантарса тăнă.

▲ Албани столицине—Тирана хулине—акăлчансен çар миссийĕ пынă.

▲ Парижри верховнăй судăн решенийĕ тăрăх, Виши «министрĕсемпе» чиновникĕсем пулса ĕçленĕ çынсен пурлăхĕсене туртса илме пуçланă.

▲ Варшава хулинче Польшăри социалистсен партийĕн (ППС) Варшава воеводствинчи организацийĕн съезчĕ пулса иртнĕ. ППС Центральнăй исполнительнăй комитечĕн генеральнăй секретарĕ Стефан Матушевский министр политикăллă доклад туса панă.

▲ Бейрутра хĕрарăмсен пит пысăк митингĕ пулса иртнĕ. Митинга Хĕрлĕ Çар ячĕпе Совет Союзĕн тусĕсен обществин хĕрарăм секцийĕ организациленĕ.

▲ Англин çар министрĕ Григг каланă тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа союзниксем 1 миллион та 500 пин нимĕçе тыткăна илнĕ. Ку шута Хĕрлĕ Çар тыткăна илнисем кĕмеççĕ.

▲ Ньюпорт-Ньюс верфĕнче (Виргини штачĕ) американецсен çĕнĕ йышши «Мидуэй» авианосецне шыва антарнă. Вăл 45.000 тонна таякан çĕнĕ йышши пилĕк авианосецран пĕрремĕшĕ пулса тăрать. Çĕнĕ авианосец çинче икĕ моторлă 80 самолет вырнаçать.

▲ Каир хулинче Араб çĕршывĕсен лигине тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн пирвайхи ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Араб çĕршывĕсен делегачĕсем пурте пулнă, Сирипе Иемен представителĕсем кăна пырса çитеймен.

▲ Кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Японире вăтам тата аслă шкулсем пурте хупăнмалла, Японин çутĕç министрĕ Кадама каланă тăрăх, вĕсене наци обоpонине тата çар производствине кирлĕ пирки хупаççĕ.

▲ Иран регенчĕ Абдулла принц Рузвельт чĕннипе Пĕрлешÿллĕ Штатсене кайса килет.

▲ Пĕрлешÿллĕ Штатсем вăрçă хыççăн Египетра авиаци бази тăвасшăн.

▲ Румынсен Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлекен обществи Бухарестра совет искусствин мастерĕсен ячĕпе йышăну туса иртгернĕ.

▲ Польшăна оккупациленĕ вăхăтра гитлеровецсем Польша интеллигенцине пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пынă. Польшăри Наука академийĕн 11 членĕ концентраци лагерĕсенче пĕтнĕ.

▲ Çак кунсенче Данири Обенро портĕнче Дани патриочĕсен отрячĕ темиçе цистерна бензин сирпĕнтерсе е çунтарса янă.

▲ Осло хулинче нимĕç оккупанчĕсене хирĕç диверсиллĕ çĕнĕ ĕç тунă. Нимĕçсем валли автомобильсем юсаса тăнă мастерской сирпĕнтерсе янă. (ТАСС).

ТОКИО ХАЛАХНЕ УРАХ ÇĔРЕ КУÇАРМА ПОЕЗДСЕМ ХУШСА ПАРАÇÇĔ

ТОКИО, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «Асахи» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Токио хулинчен çĕршывăн тĕрлĕ районĕсене уничченхинчен 20 поезд ытларах çÿреççĕ. Вăл поездсем сывлăшран тапăннипе сиен курнă халăха тата урăх çĕре куçакан халăха турттараççĕ.

«Майници Симбун» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Токио муниципалитечĕ Токио хулин çунса кайнă районĕсенче пахчасем тума йышăннă.

Редакцие килнĕ çыру

„Эпĕ мар, вăрçă айăплă"

Çĕрпÿ хулинче ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем парса тăрас ĕçре йĕркесĕрлĕхсем нумай. Рабочисемпе служащисем иртнĕ çулхи апрель уйăхĕнчен вара горпоран тăвар илмен. Пекарньăсем хула валли çăкăр нихăçан та çителĕклĕ пĕçермеççĕ. Педучилищĕре, ялхуçалăх техникумĕнче, фельдшерсен шкулĕнче вĕренекенсем час-часах çăкăр тупса илеймеççĕ.

Çав çитменлĕхсем çинчен сăмах хускатсан, горпо председателĕ Беспалов çапла ответлет:

—Пĕлетĕр-и эсир, халĕ вăрçă пырать! Эпĕ мар, вăрçă айăплă.—тет.

Вăрçă мар, Беспалов хăй айăплă. Çĕрпÿ горповĕ хăйне уйăрса панă темиçе çĕршер пăт тăвара, темĕн чухлĕ спичкăна кашни кварталтах кÿрсе килмесĕр хăварнăшăн никам та мар, Беспалов айăплă. Çавнашкалах вутă вăхăтра турттарман пирки тата пекарньăри работниксем хушшинче дисциплина çук пирки 2—3-шер кун çăкăр пĕçерменшĕн те вăрçă айăплă мар.

Беспалов начар ĕçленĕ пирки районри радио та, райхаçат та сахал мар шавланă. Анчах Беспалов хăйне критиклекенсене хирĕç кĕрешмелли майсене çине тăрсах шырать.

— Паян парти райкомĕн столовăйне çăкăр ан пар. Чухлатчăр-ха вĕсем пекарня çинчен хаçатра мĕнле çырмаллине,—тесе приказ парать пекарьсен бригадирне Осиповăна.

Беспалов хăй системинче ĕçлекен работниксене хăйне лăпкăн пăхăнса тăма вĕрентет. Хăйĕнпе йăпăлтатма килĕшменнисене ĕçре такăнтарма тăрăшать. Акă горпо магазинĕн заведующине, Скуратова юлташа, чирлĕ выртаканскере, ĕçрен кăларма приказ çырать. Пекарньăри йĕркесĕрлĕхсем çинчен райкома пĕлтернĕ фронтовик арăмне Аликовăна, унăн икĕ ачи чирленĕ пирки ĕçе тухайманшăн, ĕçрен кăларма хăтланать.

Кунпа çитмест-ха: горпо работникĕсене, чирлесен те, Беспаловпа килĕшмесĕр бюллетень пама юрамасть иккен:

— Манран ыйтмасăр эсир пирĕн работниксене ÿлĕмрен бюллетень ан панă пултăр!—тесе çĕмĕрттерет вăл телефон тăрăх больницăри врачсене.

Тĕлĕнмелле, Беспаловăн çакнашкал йĕркесĕрлĕхĕсем çинчен район руководителĕсем пĕлмеççĕ мар, анчах ăна йĕркене кĕртме никам та пуçтарăнмасть. Хăçанччен чăтса пурăнмалла-ши вара Беспаловăн мăшкăлне?!

П. ПАВЛОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00055 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Тираж 16.000